## Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# «Чи лайăх вĕренекен»

Муркаш шкулĕнче кăçал «Чи лайăх вĕренекен» конкурса темиçе тапхăрпа ирттерчĕç. Ку мероприятие шкул директорĕн воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ Г.Л. Сидюшкина йĕркелесе ертсе пычĕ.

Пĕрремĕш тапхăрта ачасем хăйсене килĕшекен предметсене суйласа илсе шкулти олимпиадăсене хутшăнчĕç. Малти вырăнсене йышăннисем иккĕмĕш тапхăра хутшăнма тĕпчев ĕçĕсем хатĕрлерĕç.

Наукăпа тĕпчев конференцийĕ ака уйăхĕн 12-мĕшĕнче иртрĕ. Конференци икĕ секцие пайланчĕ: обществăпа гуманитари тата естествăлла секцисем. Ку тапхăр валли вĕренекенсем докладсем анчах мар, презентацисем те янтăларĕç. Жюри членĕсем конкурсантсен ĕçĕсене хакласа çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç. 19 ача тĕрлĕ номинацире мала тухма тивĕç пулчĕ.

Виççĕмĕш тапхăр ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче иртрĕ. Вăл кун шкулта чăн-чăн уяв пулчĕ. Залра вĕренекенсемпе вĕрентекенсем кăна мар, çĕнтерӳçĕсен ашшĕ-амăшĕсем тата ку уява ирттерме пулăшнă спонсорсем те пулчĕç. Вĕсенчен уйрăмах «Татьяна» ООО генеральнăй директорне Т.Л. Григорьевана, «Агрокредит» кооператива, «Визит» магазин директорне Л.В. Николаевана, В.П. Портнова предпринимателе, депутатсен районти Пухăвĕн депутатне Ю.А. Кузнецова палăртмалла.

Муркаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă, Шупашкар хула канашĕн депутачĕ Г.В. Данилов ачасене саламларĕ, вĕренӳре ăнăçу сунчĕ, çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесемпе чысларĕ. Ку конкурсра вара «Чи лайăх вĕренекен» ята 10 «а» класри Алексей Ефимов тивĕç пулчĕ. Муркаш шкулĕн администрацийĕ çĕнтерӳçĕн ашшĕ-амăшне Тав хучĕ парса чысларĕ.

Уявра хореографи ушкăнĕ куракансене ташă-юрăпа савăнтарчĕ.

**Г. НИКОЛАЕВА, вырăс чĕлхин учителĕ;**
**Н. ЯСТРЕБОВА, шкул библиотекарĕ.**

## РФ Пенси фончĕн районти управленийĕнче

# Страховани свидетельствисем илчĕç



Чăваш Республикинче апрелĕн 19–27-мĕшĕсенче иртнĕ «Çурхи ырă ĕçсен эрнине» хутшăнса тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ пынă май

РФ Пенси фончĕн районти управленийĕ районти шкулсенчен вĕренсе тухакансен анкетированине ирттерес тата обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствисене парас ĕçсене туса ирттерчĕ. Эрне хушшинче 244 вĕренекене страховани свидетельствисем панă. Юнкă, Йӳçкасси, Чуманкасси, Нискасси тата Ярапайкасси шкулĕсенче, Муркаш лицейĕнче харпăр хăйĕн (персонифицированнăй) учечĕн пĕлтерĕшĕ пирки уроксем ирттернĕ. Муркаш лицейĕнчи 13 вĕренекене страховани свидетельствисене савăнăçлă лару-тăрура панă.

**О. АЛЕКСЕЕВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн персонифицированнăй учет, страхователсемпе тата страхланă çынсемпе ĕçлес, парăмсене шыраса илес енĕпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ.**
**Сăн ӳкерчĕкре: Муркаш лицейĕнче свидетельствăсем панă вăхăтра.**

## Чăваш чĕлхин кунне халалласа

# *Эпир те айккинче юлмарăмăр*

Чăваш чĕлхин кунне 1992 çултан тытăнса паллă тăваççĕ. Ку уяв вăл пирĕн республикăшăн та, пур халăхшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Мĕншĕн тесен хамăра хамăр хисеплесси, хамăра пĕлесси тăван чăваш чĕлхинчен пуçланать. Чăвашлăх историне, культурине те пĕлес пулать.

Чăваш чĕлхин кунне халалласа Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче сахал мар мероприятисем пулса иртрĕç тата иртеççĕ те. Мăн Сĕнтĕр библиотекинче те «Чăваш чĕлхи: авалтан – малашлăха» кĕнекесен выставкине йĕркелерĕмĕр.

Литературăпа пĕлӳ сехечĕ интереслĕ иртрĕ. Унта шкулти çиччĕмĕш классенче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Ку енĕпе шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем В.В. Сапожникова, Е.В. Иванова, Н.В. Варюхина пысăк пулăшу пачĕç.

Малтанах М.В. Лаптева шкул ачисене чăвашлăх историйĕ çинчен каласа пачĕ: чăваш чĕлхи ăçтан пуçланса кайнă, мĕншĕн ку ыйту халĕ те чĕлхеçĕсене, тавра пĕлӳçĕсене интереслентерет т. ыт. те. Кайран чăваш чĕлхин пуянлăхĕ, хăвачĕ халăх юррисенче, тупмалли юмахсенче, ваттисен сăмахĕсенче, сăвăсенче анлăн сăнланса юлнине кăтартса патăмăр. Унтан тата 30 таран тупмалли юмах каламалла пулчĕ литературăпа пĕлӳ сехетне хутшăнакансен. Шкул ачисем питех те активлă пулнине палăртма кăмăллă. Пултаруллисем вара библиотекăран пĕчĕк парнесене тивĕçрĕç.

Чăваш чĕлхишĕн калама çук пысăк ĕç туса ирттернĕ Н.И. Ашмарин, И.Я. Яковлев, Н.В. Никольский пирки те калаçу пулчĕ. Хыççăн вара пĕр шухăшлă пулса пурте çавна палăртрĕç: эпир чăн-чăн чăвашсем, унăн чĕлхипе культурине упракансем. Чи пысăк ĕç тăватпăр. Хамăрăн тĕлĕнмелле илĕртӳллĕ чăваш чĕлхине çухалма памастпăр. Пирĕн аллăмăрта хамăр чĕлхе те, культура та, истори те. Упрăпăр ăна малашне те.

**С. СОКОЛОВА, Мăн Сĕнтĕр библиотекин заведующийĕ.**

## Культура хыпарĕсем

# Чăн-чăн маттурсем

Çак кунсенче Шупашкарта культура институтĕнче çамрăксен художество пултарулăхĕн республикăри иккĕмĕш фестивалĕ иртрĕ. Унта республикăри 27 ташă ушкăнĕ хутшăнчĕ. Çав шутра Москакассинчи Культура çуртĕнче йĕркеленĕ «Шуçăм» халăх ташă ушкăнĕ те. Кунпа пĕрлех Муркашри искусство шкулĕн Москакасси шкулĕнчи филиалĕн ташă ушкăнĕ те. Каласа хăвармалла, вĕсене пурне те Ирина Васильевна Петрова ертсе пырать.

Малтанах жюри членĕсем ушкăнсем хушшинче экзамен ирттерчĕç. Финала вара «Шуçăм» ташă ушкăнĕ тухма пултарчĕ. Çак çĕнтерӳçĕ ушкăнсемпе юлашкинчен гала-концерт ирттерчĕç. Кайран вара çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç. Питĕ хумханса кĕтрĕç çакна пирĕн ташă ăстисем. «Шуçăм» пĕрремĕш вырăна тухнине пĕлтерсен малтанах никам та ĕненмерĕ, кайран вара пурте хăйсен савăнăçне пытараймарĕç.

Çак фестивале хутшăннă кашни ушкăнах сертификатсем парса чыс турĕç. Апла пулсан чăннипех те пысăк чыса тивĕçлĕ Москакассинчи ташă ушкăнĕ. Уйрăмах вĕсен ертӳçи И.В. Петрова. Малашне те вĕсене Муркаш чысне çавăн пек çӳлте тытма сĕнес килет.

**Г. ГОЛУБЕВА, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

## Ырă ĕçсен çулталăкĕнче

# *Тавралăх илемлĕрех пулĕ*



Тавралăх илемĕшĕн эпир те тăрăшатпăр.

Хаяр сивĕ хĕл иртсе кайрĕ. Ăшă кунсем пуçланчĕç. Юр та ирĕлсе пĕтрĕ ĕнтĕ. Çурхи çанталăк пурне те илĕртет. Анчах та йĕри-тавра пăхатăн та... Пачах урăх ӳкерчĕк куç умне тухса тăрать. Мĕн кăна йăваланса выртмасть-ши? Çакна курсан чун ыратать. Эпĕ вара нихăçан та урама е ытти çĕре çӳп-çап пăрахмастăп, шăллăма та çакна вĕрентетĕп.

Çавна май шкул территорийĕнче тирпейилем кĕртес тесе эпир ĕçлес терĕмĕр. Ку вăл ака уйăхĕн 15-мĕшĕнче пулчĕ. Эпир, кĕçĕн классенче вĕренекенсем, садра ĕçлерĕмĕр. Аслă классем вара столовăй патĕнче тирпейлерĕç. Эпир садра çулçă турарăмăр, вĕсене купасене пуçтартăмăр, туратсем пухса тирпейлерĕмĕр. Çака пулмасть-и-ха вара ырă ĕç? Пĕрре хамăршăн лайăх, тепĕр енчен çут çанталăкшăн та усăллă. Кайран пирĕн пата аслă классем те килчĕç.

2008 çула Ырă ĕçсен çулталăкĕ тесе палăртнă. Ырă ĕçсем тума нихăçан та манас марччĕ. Çут çанталăк илемĕшĕн кашниех тата куллен тăрăшар. Ку вăл пирĕн малашлăх пулса тăрать.

**Настя ФЕДОРОВА, Шурча шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен.**

## Должники и их долги

# Плати вовремя и живи спокойно

Каждому человеку для полной и счастливой жизни необходимо жилье. И все мы желаем жить в красивых, надежных и благоустроенных домах. Также каждому известно, что без достаточных финансовых средств поддерживать свое имущество в достойном состоянии невозможно.

Именно для поддержания в надлежащем состоянии жилых домов в апреле текущего года проведен весенний осмотр муниципального жилищного фонда Моргаушского района. Итоги осмотра показали, что для приведения жилых домов в состояние, соответствующее правилам норм технической эксплуатации жилищного фонда, требуется вложить по предварительным расчетам около 5 млн. руб. В целях приведения жилфонда к вышеуказанным правилам составляется план ремонта жилого фонда, но в связи с тем, что имеются недисциплинированные наниматели и собственники жилья, которые не вносят своевременно плату за содержание жилья и оказанные комунальные услуги, нет возможности выполнить все работы и произвести расчеты за оказанные жилищно-коммунальные услуги с коммунальными предприятиями и своевременно рассчитаться за потребленную электроэнергию и газ.

Из-за несвоевременного внесения платежей за жилое помещение и коммунальные услуги возникают трудности по оказанию жилищно-коммунальных услуг другим жильцам домов, а также влияет на своевременность проведения ремонтных работ, чем ущемляются права жителей, проживающих в многоквартирных жилых домах, которые своевременно платят за оказанные жилищно-коммунальные услуги.

Управляющая компания ЖКХ Моргаушского района просит **до конца мая с.г.** погасить образовавшиеся долги. В противном случае будут подготовлены материалы для передачи в судебные органы для выселения с последующим предоставлением помещения в пределах норм общежития (если оплата за жилье не произведена более 6 мес.). Также будут взысканы в судебном порядке с учетом пени, равной одной трехсотой действующей на момент оплаты ставки рефинансирования ЦБ РФ от не выплаченных в срок сумм за каждый день задержки, начиная со следующего дня после установленного срока выплаты по день фактического расчета включительно (если оплата не произведена до 6 мес.). Более половины злостных неплательщиков уже официально предупреждены о предстоящих переменах в своей судьбе.

***Вот список самых недобросовестных жильцов, которые не платили от 8 мес. и далее:***

| Ф.И.О. должника | Адрес | Сумма задолженности на 29.04.08 руб. |
|---|---|---|
| Полякова Ж.В. | с. Моргауши, ул.Парковая, д.1,кв.25 | 7636,93 |
| Никифоров В. | с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д.22, кв.4 | 11989,06 |
| Охотин А.Г. | с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д.26, кв.8 | 7402,46 |
| Димитриев П.Н. | с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д.36, кв.12 | 22365,14 |
| Соколова Н.Г. | с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д.40, кв.12 | 12240,00 |
| Алексеева Ю.А. | с. Моргауши, ул.50 лет Октября, д.44, кв.13 | 11053,74 |
| Иванов Ю.А. | с. Моргауши, ул.Ленина, д.38, кв.7 | 38146,24 |
| Григорьева В.Н. | с. Моргауши, ул.Мира, д.9, кв.7 | 30331,33 |
| Савельев Н.А. | с. Моргауши, ул.Заводская, д.15, кв.24 | 11229,40 |
| Григорьев В.М. | с. Моргауши, ул.Коммунальная, д,4, кв.6 | 5594,66 |
| Григорьева С.Х. | с. Моргауши, ул.Восточная, д.7, кв.6 | 10220,99 |
| Кондратьева С.А. | с. Моргауши, ул.Восточная, д.6, кв.12 | 5768,82 |
| Ванюков Ю.С. | с. Моргауши, ул.Гагарина, д.12 | 14526,03 |
| Степанов А. | с. Моргауши, ул.Заводская, д.9 | 23077,81 |
| Толикина И.Г. | с. Моргауши, ул.Гагарина, д.8, кв.14 | 7668,84 |
| Аргандеева Л.И. | с. Моргауши, ул.Гагарина, д.8, кв.25 | 6512,17 |
| Гаврилова Г.В. | с. Моргауши, ул.Восточная, д.6, кв.19 | 10366,76 |
| Степанова В.А. | с. Моргауши, ул.Кр.Площадь, д.6, кв.30 | 23244,72 |
| Родионова С.Н. | с. Моргауши, ул.50 Лет Октября, д.42, кв.1 | 6524,97 |
| Васютина И.А. | с. Моргауши, ул.Чапаева, д.59, кв.36 | 7299,58 |
| Васильева Л.И. | с. Моргауши, ул.Парковая, д.3а, кв.5 | 27830,83 |
| Васильева А.Г. | с. Моргауши,ул.Парковая, д.3а, кв.25 | 8963,19 |
| Викентьева М.В. | с. Моргауши, ул.Парковая, д.5, кв.7 | 5192,77 |
| Герасимов А.И. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.3, кв.6 | 8378,89 |
| Васильев А.Г. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.32, кв.10 | 23389,87 |
| Васильев П.П. | с.Б.Сундырь, ул.Новая, д.32, кв.8 | 3551,21 |
| Петрова Л.Л. | с. Б.Сундырь, ул.Заводская, д.19, кв.2 | 4368,29 |
| Коновалова Ф.Л. | с. Б.Сундырь, пер.Учительский, д.4, кв.14 | 11066,74 |
| Мишкина Л.И. | с. Б.Сундырь, пер.Учительский, д.4, кв.17 | 5118,63 |
| Софронова В.А. | с. Б.Сундырь, пер.Учительский, д.4, кв.18 | 15558,12 |
| Петрова М.С. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.8 | 32040,38 |
| Сапожникова В.В. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34. кв.13 | 9948,72 |
| Александрова А.С. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.15 | 4965,57 |
| Захарова С. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.16 | 5951,99 |
| Трофимова М.Р. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.36 | 20823,19 |
| Воробьев И.А. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.33 | 42773,21 |
| Пайзеров В. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.47 | 11181,71 |
| Семенова Т.В. | с. Б.Сундырь, ул.Заводская, д.22, кв.13 | 18809,7 |
| Пожидаева И.А. | с. Б.Сундырь, ул.Новая, д.34, кв.17 | 24002,70 |
| Митрофанов С.П. | с. Б.Сундырь, ул.Советская,д.11, кв.19 | 24038,35 |
| Иванов Ю.Г. | с. Б.Сундырь, ул.Советская,д.17, кв.3 | 13094,21 |
| Богданов В.Н. | с. Б.Сундырь, ул.Советская,д.19, кв.3 | 12474,59 |
| Мамыкина В.Н. | с. Б.Сундырь, ул.Советская,д.19, кв.2 | 13917,21 |
| Щербакова М.А. | с. Б.Сундырь, ул.Мичурина, д.10, кв.1 | 17649,14 |
| Богданов Ю.Г. | с. Б.Сундырь, ул.Мичурина, д.10, кв.2 | 13563,14 |
| Матюкова Т.Н. | с. Б.Сундырь, ул.Мичурина, д.10, кв.6 | 14534,85 |
| Зейнетдинов А.С. | с. Б.Сундырь, ул.Ленина, д.93, кв.1 | 21507,04 |
| Белоусова И.А. | д. Тренькино, д.1, кв.10 | 31678,14 |
| Храмова Л.Г. | д. Тренькино, д.2, кв.1 | 21271,53 |
| Максимова Т.А. | д. Тренькино, д.3, кв.2 | 15711,93 |
| Иванов Н.Е. | д. Тренькино, д.4, кв.8 | 8685,94 |
| Чернов А.Н. | д. Тренькино, д.4, кв.7 | 19796,50 |
| Павлова Н.И. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.3 | 27700,30 |
| Петрова М.Ф. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.5 | 9951,89 |
| Еремин О.А. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.12 | 32505,57 |
| Яравайкин Н.Б. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.15 | 17232,15 |
| Николаева З.Н. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.17 | 47458,94 |
| Мрчеев А.Н. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.20 | 20695,65 |
| Ефремов Ю.П. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.40 | 8287,28 |
| Васильева З.Н. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.41 | 38906,02 |
| Петров Э.В. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.42 | 31012,72 |
| Илинбаев В.И. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.1, кв.43 | 30488,97 |
| Запольская Р.Ф. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.2, кв.3 | 11879,10 |
| Васильева Л.П. | д. Ярославка, ул.Центральная, д.2, кв.6 | 30453,41 |
| Васильева А.Н. | д.Ярабайкасы, ул.Молодежная, д.2, ев.12 | 36072,43 |
| Никитина В.В. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.2, кв.6 | 18886,78 |
| Шатрова Е.М. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.2, кв.8 | 69495,11 |
| Яковлева Р.М. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.3, кв.4 | 36550,56 |
| Алексеева Е.М. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.3, кв.12 | 31241,61 |
| Ефимов В.К. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.3, кв.17 | 58150,51 |
| Ложнова И.П. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.4, кв.3 | 8619,05 |
| Малькова Е.И. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.4, кв.14 | 12857,57 |
| Александрова И.П. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.4, кв.18 | 31795,79 |
| Васильев С.Н. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.4, кв.19 | 31961,66 |
| Гаврилов В.В. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.4, кв.23 | 11579,37 |
| Кошельков Н.И. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.5, кв.2 | 7428,03 |
| Савельев Н.А. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.5, кв.7 | 18893,38 |
| Краснова Р.И. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.6, кв.4 | 16633,21 |
| Бабушкина З.В. | д.Москакасы, ул.Зеленая, д.6, кв.17 | 9744,73 |
| Пыркина М.Н. | д.Москакасы, ул. Сидуковская, д.22, кв.3 | 7960,70 |

**Н.В. ЛЮБИМОВ, директор Управляющей компании ЖКХ.**